**Шурă кăвакарчăн**

- Шурă-шурă кăвакарчăн,
Ма вĕçетĕн пĕр-пĕччен?
Мĕн шыратăн ирĕн-каçăн
Кăвак пĕлĕт тӳпинче?

- Ах, вĕçетĕп эп, йĕретĕп,
Вут çунать ман ăшăмра:
Хурчăка тытса аркатрĕ
Манăн савнă мăшăра!

- Шурă-шурă шураппаçăм,
Ма салхуллăн эс ларан?
Куçăнтан мерчен куççулĕ
Ирĕн-каçăн юхтаран?

- Ах, ларатăп эп, йĕретĕп,
Вут çунать ман ăшăмра:
Юнлă вăрçăра вĕлерчĕç
Манăн савнă мăшăра!..

- Çук, ан лар-ха, шураппаçăм,
Ан юхтар çут куççульне.
Çилçунат ут йĕнерле те
Тухса вĕç тăшман çине.

Нимĕн шиксĕр, çĕнтерӳллĕн
Çапăç эсĕ тăшманпа.
Пуçне хунă мăшăрушăн
Çакă пулĕ ыр парне!

1938

*Тукташ, И. Шурă кăвакарчăн : [сăвă] / И. Тукташ // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 221.*